**Эп ун чухне ачаччĕ**

Шӳтлĕ сăвă

Шăтман хăва ларатчĕ,
Ӳсмен куян хыратчĕ.
Шăтман çĕртен шăтартăм,
Пулман çĕртен пултартăм.
Юмах ярса юптартăм,
Тавра яла култартăм.
...Эп ун чухне ачаччĕ,
Аттем манпа танахчĕ.
Кукаç сăпка сикетчĕ,
Анне ваййа çӳретчĕ.
Куй-куяна хăратрăм,
Вĕшлемпелен çаклатрăм.
Ик кун ашне пĕçертĕм,
Вуник яла çитертĕм.
Вунçич калпак çĕлетрĕм,
Киле-йыша тĕсетрĕм.
...Эп ун чухне ачаччĕ.
Атте шакла пăчаччĕ.
Кукаç сăпка сикетчĕ,
Анне катан тĕртетчĕ.
Шăтман хава ларттартăм.
Пулман çĕртен пултартăм.
Суя çулпа чуптартăм,
Чеен кулса юптартăм.

*Ахун, В. Эп ун чух ачаччĕ : [сăвă] / В. Ахун // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 224.*